********

Ача пек Атӑл тӗлӗкне кӗрсе
Сайра хутра ҫӳрен пӑрахутсем
Пӑсмаҫҫӗ-и касхи ӳкерчӗке?..
Ҫӳрӗҫинех, ара, пӗреххутчен.

Пӗли-пӗлми йӑр-яр сӑрланӑ пек
Шевлен-шевлен ӳкет те ГЭС ҫути
Ылтӑнланса-кӗмӗлленсе ҫитет
Вуткайӑкла Шупашкара ҫити.

Каҫ сӗмлӗхне ҫунат вӗҫпе чӗрсе
Ман умранах вӗлт турӗ пӗр чарлан.
Камран хӑрас, кама ман ӑмсанас? —
Турри мана та вӗлт вӗҫме чарман.

Тӳлек хумсем ҫине ӳпне выртса
Тӳлек шухӑшӑмсем йӗркен-йӗркен
Сӑвӑланса тухаҫҫӗ ҫырана, —
Суйла-суйла сума ҫеҫ ан ӳркен.

Чул тусанне хум ҫӗклесе илет,
Илет те каялла сулать ӑна.
Иртнисене, ӑнман кунӑмсене
Ҫуса илмест вӑл — пӑтратать кӑна.

Иккен, илемлӗх чунӑмра анчах:
Ҫак тараватӑ каҫа пӑхмасӑрах
Аса-илӳ чуна хускатиччен
Кунтан, тен, каймаллаччӗ паҫӑрах...

*Исмуков, Н. А. «Ача пек Атӑл тӗлӗкне кӗрсе...» : [сӑвӑ] // Исмуков, Н. А. Ҫӑлри ҫӑлтӑрсем = Звезды в кладезе : [сӑвӑсем] / Н. Исмуков. – 2-мӗш хушса кӑларнӑ кӑларӑм. – Шупашкар, 2011. – С. 210, 212.*